# Сказка Напёрсток



Ёлĕк-авал пĕр ялта тăлăх арăм пурăннă тет. Унăн пӳрнеске пек ачи пулнă. Вĕсем питĕ чухăн пурăннă тет.

Пĕрре вĕсен çимелли пачах пĕтсе çитет те, Пӳрнеске амăшне çапла калать:

— Анне, — тет, — эпир ĕнтĕ выçă ларатпăр, пуян Эрхип хăйĕн ылтăнне çăнăх ырçи ăшĕнче пытарса усрать. Кайса вăрласа килем-и çавăн ылтăнне? — тет.

— Каясси кай та, ачам, анчах Эрхип куçĕ тĕлне ан пул, — тет амăшĕ.

Пӳрнеске каç пулсанах тухса кайрĕ тет пуян Эрхипĕн ылтăнне вăрлама. Кĕлет алăкĕ айĕнчи кушак шăтăкĕнчен шăвăнса кĕчĕ тет те шалалла, çăнăх ырçи ăшне кĕрсе ларчĕ тет.

Çак вăхăтра Эрхип арăмĕ çăнăх илме тухнă тет. Çăнăхпа пĕрле вăл Пӳрнескене те илсе кĕчĕ тет те çăнăхне аламасăрах кăвас хурса лартрĕ тет.

Акă тепĕр кунне пуян Эрхип арăмĕ чуста çăрма тытăнчĕ. Çаннисене тавăрчĕ тет те, хĕнет те хĕнет тет кăвас чĕресĕ ăшĕнчи Пӳрнескене аяккисенчен.

— Инке, аяк пĕрчине хуçатăн! — тесе кăшкăрать Пӳрнеске кăвас чĕресĕ ăшĕнчен.

— Ай-уй, — тет Эрхип арăмĕ тĕлĕннипе, — ку кăвас чĕресне мĕн пулнах? Халиччен чĕриклетменнине паян чĕриклетме пуçларĕ, — тет. Хăй пурепĕр ик аллипе чыша-чыша чустине çăрать.

— Инке, аяк пĕрчине хуçатăн! — тесе кăшкăрать Пӳрнеске татах.

Пуян арăмĕ чарăна-чарăна итлесе çăрать чустине.Пӳрнеске пурепĕр

кăшкăрма чарăнмасть.

Юлашкинчен пуян арăмĕ тарăхса çитет те ку чустана усал ернĕ пуль тесе картишне кăларса тăкать. Эрхипĕн хура ĕни пырать те чустана тешĕрме тытăнать. Пӳрнеске хăпăл-хапăл чуста ăшĕнчен чаваланса тухать те ĕне хăлхи ăшне кĕрсе ларать.

Тухать тет пуян арăмĕ хура ĕнине сумашкăн. Сума пуçланă-пуçламанах Пӳрнеске ĕнине хăлхинчен çатăрт! çыртать те, хура ĕне пуян арăмне пĕрех шартлаттарса тапса ярать. Арăмĕ виçĕ хăлаç аяккалла сирпĕнсе каять тет. Унтан ури çине тăрать те ĕни патне:

— Хура ĕне, тăпрукан! Хура ĕне, тăпрукан! — тесе йăпатса пырать тет.

Пӳрнеске хуçа арăмне хирĕç хулăн сасăпа:

— Хура ĕне, тăпрукан! Хура ĕне, тăпрукан! — тесе мăшкăлласа ларать.

Пуян арăмĕ хăранипе пĕр вырăнтах хытса тăрать. «Ахăртнех ку ĕне усал ернĕ чустана çисе пăсăлса кайнă-тăр», — тесе пӳртелле çил пек вĕçтерсе тарса кĕрет.

Хайхи Эрхиппе арăмĕ ĕнене усал ернĕ тесе пусаççĕ те пыршине çырмана кайса пăрахаççĕ. Унта Пӳрнеске те ларса каять.

Ĕне пыршисене çиме Кашкăр пырать тет. Пӳрнеске хăвăрт кăна Кашкăр хăлхи ăшне кĕрсе ларать те ши! шăхăрать. Унччен те пулмасть Кашкăр хăранипе тара парать вăрманалла. Эх, тарать, эх, тарать! Пӳрнеске хытăран хытă шăхăрать. Кашкăрăн хăранипе чĕри çурăлчĕ кайрĕ тет те вăл çавăнтах ӳксе вилчĕ тет.

Пӳрнеске Кашкăр хăлхинчен тухсан шухăшлама тытăнать: «Ĕнтĕ ку Кашкăр тирне сӳсе сутатăп та укçине аннене кайса паратăп».

Çак вăхăтра çулпала пĕр хуçа вĕçтерсе килет тет. Хăй сакăр кашталлă кӳмепе тет. Кӳмине виç пар маттур хура ут кӳлнĕ тет. Хуçан кӳми çинче пĕр пĕчĕк арчапа ылтăн пулнă иккен.

Пӳрнеске йăпăр-япăр кашкăр хăлхи ăшне кĕрсе выртать.

Хай хуçа кашкăр тĕлне çитет те ямшăкне лашисене чарма хушать.

— Ак телей! Мана валли çул çинчех тăлăп çухилĕх тухса выртнă. Илсе хурас ăна кӳме çине, — тет вăл ямшăкне.

Вилнĕ кашкăра кӳме çине илсе хураççĕ те малалла вĕçтереççĕ. Кăшт кайсанах Пӳрнеске кашкăр хăлхи ăшĕнчен ши-ши! шăхăрса ярать.

— Кам шăхăрать унта? — тесе каялла çаврăнса пăхать хуçа.

Анчах Пӳрнеске шăхăрма чарăнать. Кăшт кайсан каллех шăхăрса ярать.

— Кам шăхăрать унта? — ыйтать хуҫа тарăхса.

Пӳрнеске каллех шăхăрма чарăнать. Тепёртак кайсан Пӳрнеске мёнпур вăйпа шăхăрса ярать. Хуҫа тарăхнипе шалт ăнран каять.

— Чим-ха, чар лашусене. Атя-ха анса пăхар, пирён хыҫран арҫури шăхăрса килмест-и, — тет вăл ямшăкне. Хуҫапа ямшăкё иккёшё те кӳми ҫинчен анаҫҫё те ҫул тăрăх каялла утаҫҫё.

Ҫак вăхăтра Пӳрнеске кашкăр хăлхи ăшён тухать те тилхепене ярса тытса вёҫтере парать ҫул тăрăх малалла. Хуҫапала ямшăкё пăхса кăна юлаҫҫё.

Пӳрнеске виҫё пар лашапа, пёр арча ылтăнпа амăшё патне пырса кёрет тет.

Мультимедийная онлайн-библиотека
“Сказки Поволжья”

Иллюстрированые и озвученные сказки народов Поволжья.